Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

84 (8150) № * Шăмат кун, 2013 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Ёçе пĕтĕмлетсе

## Тыр-пул уявĕ иртрĕ

Ноябрĕн 8-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура районти çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен черетлĕ уявĕ иртрĕ. Ăна йĕркелесси ырă йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

Чи малтанах ял хуçалăх ĕçĕпе тачă çыхăннă çынсене тав туса уява район пуçлăхĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев уçрĕ, пухăннисене ăнăçу, çирĕп сывлăх, телей сунчĕ:

– Ял хуçалăхĕн хисеплĕ ĕçченĕсем. Сирĕн пĕрлехи тăрăшулăхпа пысăк ĕç пурнăçларăмăр, мĕн лартса ӳстернине пӳлмене хывrăмăр, çанталăк вара пире хытах тĕрĕслерĕ, – терĕ вăл уй-хирте, выльăх-чĕрлĕх пăхнă тата ял хуçалăх продукцине тирпейленĕ çĕрте ырми-канми тăрăшнă ĕçченсене саламласа тав тунă май.

Уява район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев тăсрĕ:

– Çĕр ĕçне тивĕçлĕ шайра пурнăçлассинче пĕччен вăй-хăват çителĕксĕр пулнă пулĕччĕ. Çавăнпа та пире патшалăх пысăк пулăшу кӳрет, çакна асăннă отрасльте вăй хуракансем туяççĕ ĕнтĕ, вăл шутра уйрăм çемьесем те. Малашне те пĕрле тăрăшса ĕçлесчĕ, район экономикине пуянлатасчĕ, – терĕ Ростислав Николаевич уява пухăннисене.

Пурнăçланă ĕçпе тĕплĕнрех район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕпе муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳçи Владислав Ананьев паллаштарчĕ.

Уяв материалĕсемпе тĕплĕнрех хаçатăн çитес номерĕнче паллашма пултаратăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ыран – Шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕн кунĕ

## «Хастарлăх та, шалти туйăм та пулăшать»



***Сăн ӳкерчĕкри пикесем ыран хăйсен уявне уйрăмах хăпартланullă кăмăл-туйăмпа кĕтсе илеççĕ. РФ Шалти ĕçсен министерствин районти сотрудникĕсен çакна валли сăлтавĕ те пур.***

***Уголовлă шырав уйрăмĕн оперуполномоченнăйĕ Нелли Скворцова тата çул çитменнисемпе ĕçлекен инспектор Инга Игнатьева полици капитанĕсем иртнĕ кунсенче район территорийĕнче вырнаçнă коллективлă садсенчен пĕринче вăрра тытса чарнă. «Ĕçре хастарлăх кăна мар, шалти туйăм пулăшать пулас», – теççĕ шӳтлесерех хастар полицейскисем.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăнӳкерчĕкĕ.**

## Çĕнĕ ФАП алăксене уçрĕ

Ĕнер пирĕн районти Шомик ялĕнче çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ хута кайрĕ. Ăна уçма ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова килсе çитрĕ. Ялсенче çĕнĕ ФАП-сем уçни унта пурăнакансен сывлăхне çирĕплетме пулăшнине, сывлăхлă ачасем çураласси çине ырă витĕм кӳнине палăртса каларĕ вăл. Çакна май министр пирĕн районти икĕ амăшне – Муркашри Алина Тихоновăпа Васкассинчи Инна Егоровăна – виççĕмĕш ача çуралнă ятпа саламласа республикăн амăш (çемье) капиталĕн сертификатне парса чысларĕ.

Шомик тăнăç аталанакан ял. Çакна палăртса район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н. Ванеркин медицина пулăшăвне паракан çурт уçăлни питĕ вырăнлине каларĕç. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов вара кунта ĕçе кирлĕ пек йĕркелессине шантарчĕ.





Савăнăçлă саманта ял халăхĕ тахçантанпах кĕтнĕ, çавăнпах кунта ватти-вĕтти те чылайăн пухăннă. Ялтах фельдшер ĕçлеме тытăнни ватăрах çынсемшĕн тата ачасемшĕн уйрăмах лайăххине палăртаççĕ вĕсем. Вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Лебедев та çакна çирĕплетсе ФАП ку тăрăхри 600-е яхăн çынна пулăшу пама пуçласси пирки каларĕ.

Халăхшăн пĕлтерĕшлĕ ФАП уçăлни Чăваш Ен Пуçлăхĕн «О дополнительных мерах по совершенствованию оказания первичной медико-санитарной помощи сельскому населению в Чувашской Республике» Указне пурнăçа кĕртессипе çыхăннă. Халĕ Шомикра пурăнакансем те вырăнтах тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ илме пултараççĕ, фельдшерпа часчасах канашласа чир-чĕртен те сыхланма май ытларах пулĕ вĕсен.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Районта: ĕнер, паян, ыран

## Коллегире пăхса тухнă

Ĕнер Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промшленноç тата суту-илӳ министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕ иртнĕ. Унта Муркаш районĕнче «пĕр чӳрече» мелĕпе çынсене патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессин ĕçне мĕнле йĕркелени пирки ыйту пăхса тухнă.

Муркашра граждансене услугăсемпе тивĕçтерекен нумай функциллĕ центр иртнĕ çулхи сентябрь уйăхĕнче уçăлнă. Çынсенчен документсем йышăнассине тата хатĕрлесе парассине «икĕ чӳрече» мелĕпе йĕркеленĕ. Центр 35 услугăпа тивĕçтерет. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2151 çын нумай функциллĕ центрăн услугипе усă курма пултарнă.

Кунсăр пуçне услугăсемпе тивĕçтерекен центрăн «пĕр чӳрече» мелĕпе ĕçлекен филиалĕсене ялти 15 библиотекăра йĕркеленĕ. Хальхи вăхăтра библиотекăсенче муниципалитетăн 25 услугипе усă курма май пур.

## Тĕп вырăнта – ĕç эффективлăхĕ

Районти культура учрежденийĕсен ертӳçисен канашлăвĕ иртнĕ. Унăн ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хутшăннă. Канашлура культура учрежденийĕсен ĕçне эффективлăрах тăвассипе, контракт çине куçассипе, тивĕçтерекен услугăсен шутне тата пахалăхне ӳстерессипе çыхăннă тата ытти ыйтусене сӳтсе явнă. «Культура учрежденийĕсен ĕçĕ-хĕлĕн эффективлăхне, кунпа пĕрлех вĕсенче вăй хуракансен ответлăхне вĕçĕм ӳстерсе пырас пулать, бюджет укçи-тенкине шутлама пĕлмелле», – палăртнă хăйĕн сăмахĕнче Ростислав Николаевич.

## Премие тивĕçнисем – иккĕн

«Вĕренӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн çуллен çĕр-шыври 14 – 25 çулсенчи вĕренӳре тата ĕçре маттур яшсемпе хĕрсене пулăшма Раççей Президенчĕн премийĕпе тивĕçтереççĕ. Чăваш Енре кун пек чыса тивĕçнисем кăçал 44-ăн. Вĕсенчен 8-шĕ 60 пин, 36-шĕ 30-шар пин тенкĕ илĕ.

Лауреатсем хушшинче Муркашсем те çук мар. Акă Екатерина Федорова – Юнкă шкулĕн воспитанникĕ, халĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренет. Катя республикăри 8-мĕш вăрман олимпиадин çĕнтерӳçи пулса тăнăччĕ.

Николай Данилов вара çамрăк техниксен станцийĕнче ăсталăх туптать. Вăл – шкул ачисем хушшинче спортпа техника тата прикладной спорт тĕсĕ енĕпе А.Г. Николаев космонавт ячĕллĕ кубока çĕнсе илессишĕн республикăра 2012 – 2013 вĕренӳ çулĕнче irттернĕ 9-мĕш спартакиада çĕнтерӳçи.

Пултаруллă та мал ĕмĕтлĕ çамрăксене малашне те ăнăçусем сунатпăр.

## Археологсемпе тĕл пулнă

Республикăри археологсем Чăваш Ен историне тĕпчес ĕçе тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ. Тăтăшах вĕсем тĕрлĕ вырăнсене командировкăсене тухса çӳреççĕ, чавса шырав ĕçĕсем ирттереççĕ, халиччен пĕлменнине тупса палăртаççĕ.

Нумаях пулмасть Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн археологĕсен ушкăнĕ Ильинка шкулĕнче пулнă, шкул музейĕнчи экспонатсемпе паллашнă, вĕренекенсемпе тĕл пулу ирттернĕ, археологи ĕçĕсем пирки интереслине чылай каласа панă.

Çитес çул çуркунне вара археологсем кунти тăрăха тĕпчес ĕçе шкул ачисене те явăçтарма шантарнă.

## 345 ача çуралнă

Районĕпе кăçалхи 10 уйăхра 345 ача çуралнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 22 ача сахалрах.

Çуралнисем хушшинче хĕр ачасем 174 тата арçын ачасем 171.

Çынсем вилесси сахалланнă. Пурнăçран уйрăлса каякансем иртнĕ çул çак вăхăта 492 çын пулнă пулсан, кăçал – 457. Вилекенсен вăтам ӳсĕмĕ арçынсен 61 çулпа, хĕрарăмсен 76 çулпа танлашать.

Çемье çавăракансем 159 мăшăр пулнă. Вĕсен вăтам ӳсĕмĕ 18 – 24 çул.

Йыш хушăнассипе Москакасси (иртнĕ çул 34 ача, кăçал 40 ача çуралнă), Оринин (23 тата 32 ача), Çатракасси (22 тата 29 ача), Юнкă (15 тата 17 ача) ял тăрăхĕсенче лару-тăру ытти çĕртинчен лайăхрах.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Уважаемый **Валериан Семенович!**
Сердечно поздравляем Вас с юбилеем!
Желаем в эту дату здоровья и любви,
Успехов и достатка, заботливой родни,
Добра благополучия и преданных друзей,
Уверенности в будущем, счастливых, долгих дней!
**С уважением, руководство и коллектив ОАО «Птицефабрика «Моргаушская».**

Юбилей

# Пурнăç пархатарĕ



Муркаш районĕн хисеплĕ çынни Валериан Семенович Краснов çак кунсенче 75 çул тултарать. Вăл Катькас ялĕнче 1938 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Çавна май эпĕ унпа маларах тĕл пулса калаçнăччĕ, вăл хăй кун-çулĕпе паллаштарма кăмăл турĕ.

– Пирĕн вăхăтрисен пурнăçĕ мĕнле пулнине пурте лайăх пĕлеççĕ. Паллах, пирĕн ачалăх кунĕсем вăйă-кулăпа тулаймарĕç. Уй-хирте тата ытти ĕçре аслисенчен кая юлман, тар юхтарса тăрăшнă, – калаçăва пуçарчĕ Валериан Семенович ачалăх çулĕсене аса илнĕ май.

...Çапла вара çул хыççăн çул иртет. 1957 çулта вăл 1 № профтехучилищĕрен вĕренсе тухать. Çакăн хыççăн пултаруллă яш Улатăр районĕнчи Кире поселокĕнче электромонтерта ĕçлеме пуçлать. Ăс-тăна туптас, аслă пĕлӳ илес шухăш вара ăна пĕр вĕçĕм канăç памасть. Çавăнпа та çамрăк специалист Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтне çул тытать, агронома вĕренет. Çапла вара аслă пĕлӳллĕ ертӳçĕ «Передовик» хуçалăха ертсе пыма тытăнать.

– Ун чухне çак колхоз кайрисен шутĕнчеччĕ. Вылăх-чĕрлĕх валли улăм та çукчĕ, выçăпа нушаланатчĕç. Вăл вăхăтсенче сарайсене улăмпа витнĕ, çавăнпах тăрантарнă. Çуркунне çитсен вара акма тырри те пулман. Кунта, паллах, тупăш пирки калаçу та çук. Епле пулсан та çак йывăрлăха чăтса ирттермелле. Ĕç дисциплинине çирĕплетсе пĕтĕм вăй-хала хурса çынсене колхоз ĕçĕпе интереслентерме тăрăшрăмăр. Çапла вара ерипен «Передовик» колхоз аталанма пуçларĕ. Каярах вара малти рете те тухрĕ, – каласа парать Валериан Семенович.

Ял хуçалăхне парăннă тăрăшуллă çын ӳсĕмлĕ ĕçлесе пынипе паларма пуçлать. Фермăсене механизацилес ыйту çине пысăк тимлĕх уйăрать. Вăл тăрăшнипе механизациленĕ пĕрремĕш объект хута каять. Çавна май ăста специалиста район шайĕнче асăрхаççĕ, ял хуçалăх управленийĕнче ĕçлеме сĕнеççĕ. Кунта та вăл фермăсене механизацилессипе чылай тăрăшать.

Ятлă-сумлă çынна унăн ĕçĕсем татах та çӳле çĕклеççĕ. 1976 çулхи октябрь уйăхĕнче Валериан Краснова депутатсен районти сессийĕнче районти ĕç тăвакан комитет председательне суйлаççĕ. Пархатарлă ĕçсемпе палăрнăскерне 1979 çулта КПСС райкомĕн 1-мĕш секретарьне шанаççĕ. Çак тилхепене вăл 1990 çулччен тытса пырать.

Ял хуçалăх ĕçĕ уншăн çывăх пулнăран тата вăл ертсе пынă çулсенче кăтартусем палăрмаллах ӳснĕрен республика шайĕнчи ертӳçĕсем те асăрхаççĕ ăна, çавăнпа та республика ял хуçалăх министрĕ пулма шанаççĕ.

Каярахри çулсенче «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикине ертсе пырать. Ăста специалист ертсе пыракан хуçалăх республикăра яланах малтисен ретĕнче, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă.

– Халĕ аса илетĕп те тĕлĕнетĕп. Çав çулсенче объект хыççăн объект хута кайрĕ вĕт. Пĕр çултах 5 шкул, шкул çулĕччен ачасен виçĕ учрежденийĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çавăншăн пирĕн район Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствин ялавне тивĕçрĕ. Мĕн пурнăçлани йăлтах куç умĕнче, кунта хитрелетсе каланă сăмах çук. Халĕ вара хутран-ситрен пĕр объект хута каять. Çавăнпа та паянхи ĕçченсен шухăшласа пăхмалли пурах. Тивĕçлĕ канăва тухнисене вара хисеплеме те пĕлмелле, – калаçăва тăсать вăл.

Районăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕ – фельдшерпа акушер пункчĕсем, врач амбулаторийĕсем, больницăсем, ача сачĕсем, шкулсем хута ярасси, газ тата шыв пăрăхĕсем хурасси тата ытти пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ-хĕл – Валериан Семенович тăрăшнă тапхăрта пулса иртет.

Ĕçне кура хисепĕ, теççĕ халăхра. Валериан Краснова «Хисеп палли» орден (1971 ç.), Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ (1986 ç.), ВДНХ кĕмĕл медалĕсем (1974 ç., 1976 ç.), Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ (1975 ç.), РСФСР тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ (1999 ç.), Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамоти тата 20 яхăн Хисеп грамоти парса чысланă.

В. Краснова Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тата ытти шайри депутат пулма пĕрре мар суйланă. Пĕлĕвĕ пысăк пулнăран малашлăх пиркиех шухăшланă вăл. Мускав хулинчи аспирантурăра диссертаци хӳтĕлесе ял хуçалăх наукисен кандидачĕн ятне илнĕ.

– Эпĕ ĕçе тухса кайнă вăхăтра çынсен хваттерĕсенче çутă та çунмастчĕ, ĕç кунĕ те часах вĕçленместчĕ. Ачасем пĕчĕк чухне вара ытларах вĕсене çывăрнă вăхăтра кăна кураттăмччĕ. Пĕтĕмĕшле ĕç-хĕл вара мăшăрăм Римма Алексеевна çине тиенетчĕ, вăл мана ăнланать, пулăшать. Манăн ӳсĕмсенче унăн тӳпи питĕ пысăк. Енчен те çавăн пек пархатарлă çын çумра пулман пулсан, – сăмахне татрĕ Валериан Семенович мăшăрне тав тунă майăн.

Хисеплĕ мăшăр алла-аллăн тытăнса утма пуçланăранпа алă çула яхăн ĕнтĕ. Çак сумлă тапхăрăн пĕлтерĕшĕ вĕсем хăйсен икĕ ывăлне тĕрĕс воспитани пама пултарнинче. Асли, Саша, район администрацийĕнче ĕçлет. Кĕçĕнни, Эдик, Чăваш Республикин Президент Администрацийĕнче тăрăшать.

– Эпĕ атте-аннене пысăк тав сăмахĕ калатăп. Вĕсем пире ӳстернĕ, вĕрентнĕ, пурнăç çулĕ çине тăратнă, кирлĕ чухне вара ятланă та. Вĕсем пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕхре, – терĕ Александр Валерианович ашшĕ-амăшне тав туса.

Эпир, район хаçачĕн ĕçченĕсем, Валериан Семеновича халалланă йышлă салам çумне хутшăнатпăр, юбилейпа саламлатпăр, çирĕп сывлăх сунатпăр. Çакăн пек сумлă кунсем вĕççĕр-хĕрсĕр пулччăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Енчĕк




# Тенкĕн хăйĕн символ пулĕ

Вăл мĕнлерех пулĕ-ха? Раççей Банкĕ ку ыйтăва граждансене хăйсене татса пама сĕнет. Енчен те çынсем пур варианта хирĕç сасăлас палсан та символа çирĕплетеççех.

Раççей Банкĕ хăйĕн официаллă сайтĕнче Раççей наци валютин – тенкĕн – символĕ мĕнле пуласси не пĕрле сӳтсе явма сĕннĕ. Ют çĕр-шыв валютисенчен ытларахăшĕн хăйсен символĕсем пур пулсан, тенкĕн ун пек символ хальлĕхе çук.

Раççей тенкин символне пурнăçа кĕртесси пирки сĕнӳсем евро кун çути курнă хыççăнах, 1990-мĕш çулсен варринче, пулнă. 2006 çулта федерацин «Раççей Федерацийĕн Тĕп Банкĕ (Раççей Банкĕ) çинчен» саккунĕнче Раççей Банкĕ тенкĕн географи палăртмăшне знакпа (тенкĕн символĕпе) çирĕплетесси пирки каланă.

Тенкĕн граждансем сĕннĕ тĕрлĕрен географи символĕсене тишкернĕ хыççăн Раççей Банкĕн ĕç ушкăнĕ пилĕк вариант суйласа илнĕ. Вĕсенчен пĕри тенкĕн символĕ пулĕ те.

Пилĕк вариантран пĕрне граждансене хăйсене суйласа илме сĕннĕ. Вĕсем Раççей Банкĕн сайтĕнче ку е вăл вариантшăн сасăлама пултарĕç. Сĕнӳсене пĕр уйăх хушши йышăнаççĕ. Сасăлава хутшăнасси ансат: хăвăр миçе çултине (18 çултан кая мар пулмалла), арçын е хĕрарăм пулнине, вĕренӳ шайне кăтартмалла, мĕншĕн çак варианта суйласа илнĕ пирки кĕске комментари хăварма пултаратăр. Пилĕк вариантран пĕрне суйласа илнипе пĕрлех «пĕр вариантĕ те килĕшмест» тесе те сасăлама пулать. Апла пулин те «чи нумай сасă пухакан» вариант тенкĕн символне пулса тăрĕ.

Коммуникацин PR Partner агентствин генеральнăй директорĕ Инна Алексеева Тĕп Банк тенкĕн символне пурнăçа кĕртме йышăннине тĕрĕс тесе шутлать. Мĕншĕн тесен хăйсене хисеплекен укçа единицисен пурин те хăйсен символĕсем пур.

УЭК

# Йыш хушăнать

Чăваш Енре универсал электрон карттăпа усă куракансен шучĕ ытларах та ытларах. Юлашки 10 кун хушшинче кăна татах 2200 çын картта илме кăмăл тунă. Çак вăхăта УЭК илме 7200 ытла заявлени йышăннă, 1300 çынна яхăн картта хуçи пулса тăнă.

Аса илтеретпĕр. Хальхи вăхăтра Чăваш Ене килекен универсал электрон карттăсен федерацин икĕ приложенийĕ пур: идентификаци (СНИЛС тата ОМС) тата банк приложенийĕсем. 2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса карттăна автоматла майпа регионăн транспорт приложенине кĕртсе параççĕ. Транспорт приложенийĕпе Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта кăна мар, республикăн пĕтĕм территорийĕнчех усă курма пулать.

Граждансен ирĕкне кура УЭК çине вĕсем электрон цифра мелĕпе алă пуснине вырнаçтараççĕ. Çапла туни документсене электрон мелĕпе алă пусма тата услугăсене электрон мелĕпе илме май парать. Çакна заявленисем йышăнакан тата карттăсем паракан кирек хăш пунктра та тума май пур. Кун пек пунктсем халĕ республикăра 13 (Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле хулисенче, çавăн пекех Муркашпа Шупашкар районĕсенче вырнаçнă).

Заявлени панă чухне хăвăрпа пĕрле паспорт, патшалăх пенси страхованийĕн страховани свидетельстви (СНИЛС), обязательнăй медицина страхованийĕн полисĕ (ОМС) пулмалла. Карттăпа тивĕçтермелли вăхăт – заявлени панăранпа 20 кун.

**Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

Библиотека 65 çул тултарчĕ

# Кунта «чун çимĕçĕ» парнелеççĕ

Асра юлмалли пĕлтерĕшлĕ самантсем çын пурнăçĕнче кăна мар, предприятисемпе организацисен ĕçĕ-хĕлĕнче те сахал мар тĕл пулаççĕ. Акă ноябрĕн 1-мĕшĕнче Анаткассинчи ял библиотеки 65 çул тултарнине уявларăмăр. Хăнасем чылай пухăнчĕç уява: кунти шкул коллективĕ, Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов, Турайри информаципе культура центрĕн директорĕ И. Быркина, ял тăрăхĕнче йĕркеленĕ агитбригада коллективĕ, Муркашри тĕп библиотека ертӳçи И. Николаева т. ыт. те. Анаткассинчи вулавăш, унăн ертӳçи пирки ăшă сăмахсем чылай каларĕç уявра.

Аваллăхсăр малашлăх çук теççĕ. Çĕнни хыççăн çĕнни килсех тăрать. Вулавăш ертӳçи Галина Андреева 1948 çултанпа ĕçленĕ библиотекарьсем пирки тĕплĕн асăнчĕ, кашнийĕн ĕçнех пысăка хурса хакларĕ. Пурнăçра, кулленхи ĕçре нимĕн те улшăнмасть пулсан ӳсĕмсем пирĕн çăвар уçма та кирлĕ мар. Паянхи куна вара ӳсĕмсем пирĕн библиотекăра та пур. Ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе пыни, вулакана илĕртме пултарни, халăхпа хутшăнмалăх ячĕ-сумĕ пулни – пахалăхăн çак енĕсем пирĕн библиотекарĕн пĕтĕмпех пур.

Шкулпа тачă çыхăну тытнин «çимĕçĕсем» куç умĕнчех. Шкул ачисем вулавăшра куллен вĕлле хурчĕ пек сĕрлеççĕ. Паян та акă вĕсем библиотека юбилейĕнче хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Чи малтанах шкул ачисем хушшинче сочиненисен «Эпĕ ялти библиотекăра», ӳкерчĕксен «Манăн юратнă библиотека» конкурсĕсем иртрĕç. Сочиненисем çыраccипе Дима Васильев, Дима Запольский тата Христина Дмитриева пултарулăхпа палăрчĕç, грамотăсене тивĕçрĕç. Ӳкерчĕксем тăвассипе вара Женя Панов, Жанна Ефремова, Виктория Моисеева ăстарах пулчĕç. Вĕсем те грамотăсемсĕр юлмарĕç. Ачасене йĕркелесе пыраканĕ – Анаткассинчи пуçламăш шкул учителĕ Валентина Орлова.

Аслă ăрурисем те вулавăшра хăйсене хăтлă туяççĕ. Пушă вăхăтра вулавăша çул тытакансем сахал мар. Сăлтавсăр мар, хаçат-журнал вулама, чуна уçма, Интернетран тĕрлĕ информаци илме пыраççĕ. Çавсем пуçтарăннă та ĕнтĕ Анаткассинчи ял библиотекин юбилейне паллă тума.

Кĕнеке паян та чи хаклă парне пулма пăрахман-ха. Чылай çынна савăнăç кӳрет вăл. Галина Павловна библиотекăна çулсеренех чылай кĕнеке парнелекенсене те йыхравланă. Камсем-ха вĕсем? Татьяна Иванова, Екатерина Иванова, Михаил Иванов, Эльвира Филиппова, Надежда Хрисанфова, Валентина Орлова, Анатолий Морозов парнеленĕ кĕнекесем – хытă хуплашкаллă, капăр, чаплă «чун çимĕçсем».

Уява пушă алăпа çӳремеççĕ тени тĕрĕсех. Муркашри тĕп библиотека ертӳçи И. Николаева диплома, Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов Тав çырăвĕпе чысларĕç. Унсăр пуçне асăнмалăх хаклă парнесем те пулмарĕç мар. Агитбригада коллективĕ те сумлă парнепе килнĕ.

Уявра библиотека пурнăçĕпе çыхăннă презентаци те пулчĕ. Библиотека çинчен юрăсем те янăрарĕç. Уява хутшăннисем Г. Андреевăна хастар ĕçшĕн пысăк тав сăмахĕ каларĕç, малашне татах тачăрах çыхăнса ĕçлесе пырасса шантарчĕç.

**Н. ХРИСАНФОВА,**
**Анаткассинчи Культура çурчĕн ертӳçи.**



Пӳрт-ҫурт тата хӑрушсӑрлӑх

# Пӳрте мӗнле тата мӗншӗн страхламалла?

***Кирек камӑн та пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе инкек пулма пултарать – шыв илет-и, вӑйлӑ ҫил-тӑвӑл алхасать-и, хуҫи килте ҫуккине пӗлсе ҫак ырлӑхпа вӑрӑ-хурах та килелме пултарать. Е тата, Турӑ сыхлатӑр, – пушар. Хамӑр пурӑнакан пӳрте эпир пирӗнтен килмен инкексенчен сыхлаймастпӑр, анчах та ӑна тӗрлӗ инкекрен страхланипе хамӑра укҫа-тенкӗ енчен хӳтӗлеме пултаратпӑр.***

***Пурӑнмалли ҫурт-йӗре страхлассин йӗркипе паллашма пире Росгосстрах компанин Муркашри уйрӑмӗн ертӳҫин ҫумӗ Валентина СОРОКИНА пулӑшрӗ.***

– Пурӑнмалли ҫурт-йӗре страхлассин хӑйне евӗрлӗхӗ пур. Пӳрт вӑл уйрӑм ҫурт, ун патне тӗрлӗ коммуникаци пырать, юнашарах – хуҫалӑхри ытти хуралтӑсем. Кусем вӗсем: гараж та, карта та, беседка та, бассейн та, ытти те. Хуҫалӑхри пӗр хуралтӑ ҫунма тытӑнчӗ пулсан, вӑл ыттисем ҫине те хӑвӑрт куҫма пултарать. Ҫавӑнпа вӗсене те страхламалла. Ялти пӳртсемшӗн пушар тата ҫут ҫанталӑкӑн сикер пулӑмӗсем уйрӑмах хӑрушӑ, – ӑнлантарать Валентина Клементьевна.

Ҫуртӑн конструкци пайӗсене те страхлама май пур иккен, инженери тытӑмӗсене, пӳртри пурлӑха, шал енчи тата тулашри капӑрлӑха (отделка) страхласан та питӗ тӗрӗс пулмалла.

Пӳрте страхланӑ чух чи малтанах стенасем мӗнле материалтан пулнине шута илеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кирпӗч пӳрте страхламалли тариф пӗр тӗрлӗ, йывӑҫ пӳртӗн – тепӗр тӗрлӗ. Отделкӑна страхланӑ чух юсав ӗҫӗсен пахалӑхӗ ҫине, унӑн ансатлӑхӗ тата материалсен хакӗ ҫине те тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Пӳртри пурлӑха вара унӑн хакне, модельне тата хӑш ҫул туса кӑларнине май пур таран тӗрӗс палӑртса страхламалла.

Сӑмахран, РОСГОССТРАХ-КИЛ классика килӗшӗвне тӑвас пулсан заявлени ҫырмалла. Страхламалли пурлӑха страхлакан агент пӑхса тухать, ҫырса туса унӑн хакне палӑртать. Пурлӑхӑн хакне палӑртакан ӗҫ хучӗсем пур пулсан (эксперт палӑртнӑ хак, суту-илӳ килӗшӗвӗ тата ытти те), вӗсемпе страхлакан агента паллаштармалла. Ҫапла вара вӑл страхлассин суммине тӗрӗс палӑртма пулӑшать.

– Страхлакан компание, страхлассин кирек мӗнле тӗсне суйласа илнӗ пулсан та, пуринчен малтан финанс тӗлӗшӗнчи шанчӑклӑхне кура суйламалла, кайран – страхлассин хакне пӑхмалла, – ҫирӗплетсе калать ҫак ӗҫре пысӑк опыт пухма ӗлкӗрнӗ Валентина Клементьевна. – Страхлакан компани ҫынсене страхланин тӗрлӗ енӗпе мӗн чухлӗ укҫа-тенкӗ тӳленине пӑхмалла. Росгосстрахӑн Чӑваш Енри филиалӗ пӗлтӗр акӑ пурӗ 19150 страхланӑ тӗслӗхпе пӗтӗмӗшле 356 миллион тенкӗ тӳлев саплаштарнӑ. Укҫа саплаштармалли тӗслӗхсем малтанхи ҫулхинчен 2700 чухлӗ нумайрах пулнӑ. Кӑҫалхи 9 уйӑхра Муркашри уйрӑм клиентсене пурӗ 9 миллон та 157 пин тенкӗ саплаштарса панӑ. Ҫак сумма страхланин 614 тӗслӗхӗпе ҫыхӑннӑ.

Уйрӑм ҫынсем ытларах чух ҫурт-йӗре, килти пурлӑха, выльӑх-чӗрлӗхе страхланипе тӳлев илеҫҫӗ. Хыҫа юлнӑ 9 уйӑхра эпир ҫынсен тӗппипех пӗтнӗ е сиен курнӑ пурлӑхӗшӗн 2 миллион та 205 пин тенкӗ, вилнӗ выльӑх-чӗрлӗхшӗн 1 миллион та 304 пин тенкӗ тӳлев саплаштарнӑ, – ҫакӑн пек цифрӑсемпе те паллаштарчӗ В. Сорокина.

Шанчӑклӑ компанисем хӑйсем пирки пур информацие те хальхи вӑхӑтра сайтра вырнаҫтараҫҫӗ. Апла пулсан хӑйсен ӗҫне уҫҫӑн пурнӑҫлакан компание суйласа илнине нимӗн те ҫитмест. Акӑ Росгосстрах та хӑйӗн www.RGS.ru сайтӗнче информацие туллин вырнаҫтарнӑ. Ҫапла майпа ҫынсен ахаль те шанчӑклӑ компани пирки тата ытларах пӗлме май пур.

– Паянхи куна пирӗн районти 17 пине яхӑн ҫын хӑйӗн пурлӑхне страхлама пире шанать. Ҫак пурлӑхӑн пӗтӗмӗшле хакӗ 3 миллиард та 972 миллон тенкӗпе танлашать. Ҫакӑн чухлӗ пурлӑхшӑн эпир ответлӑ пулса тӑратпӑр, – ҫынсем умӗнче Росгосстрахра ӗҫлекен кашни ҫын пысӑк яваплӑха туйнине палӑртать Валентина Клементьевна.

Кӑҫал октябрьте Росгосстрах хӑйӗн 92 ҫулне паллӑ турӗ. Апла страхлас ӗҫхӗлте унӑн опычӗ пысӑкки пачах та иккӗлентермест.

Акӑ халӗ те компани ҫынсем майлӑ тепӗр утӑм турӗ: кӑҫалхи ноябрӗн 30 мӗшӗччен хӑйсен пурлӑхне ҫак компанире пӗрремӗш хут страхлакансем валли уйрӑмах лайӑх условисем йӗркеленӗ.

Кун пирки тата кӑсӑклантаракан ытти ыйтупа эсир Росгосстрахӑн Муркашри уйрӑмне ҫитсе тӗплӗнрех ыйтса пӗлме пултаратӑр. Адресӗ: Муркаш сали, Мир урамӗ, 6 ҫурт. Телефон номерӗ: 62-1-06. Тӳлевсӗр шӑнкӑравлама та май пур: 0530 (МТС, Билайн, Мегафон).

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ҫӗршер ачан «иккӗмӗш амӑшӗ»

Юбилей



Ҫатракасси шкулӗ 112 ҫул ӗнтӗ ялти ачасене пӗлӳ парса пурнӑҫӑн аслӑ ҫулӗ ҫине тухма пулӑшать. Инженерсемпе учительсем, тухтӑрсемпе воспитательсем, художниксемпе спортсменсем т. ыт. те сахал мар вӗсем хушшинче. Ҫак ӑстасем паян шкул чысне ҫӳле ҫӗклеҫҫӗ. Пурнӑҫра хӑйсен ҫулне тупма пултаракансене вӗрентсе ӳстерсе кӑларакан учительсем хӑйсен ӗҫне чунне парса пурнӑҫлани пурин куҫӗ умӗнче. Ҫавӑнпах ӗнтӗ ачасем шкулпа сыв пуллашсан та юратнӑ вӗрентекенӗсене манмаҫҫӗ.

Ноябрӗн 3-мӗшӗнче пирӗн шкулта нумай ҫул ӗҫленӗ Чӑваш Республикин Тава тивӗҫлӗ учителӗ Елизавета Ивановна 90 ҫул тултарчӗ. Етӗрне районӗнчи Орапакасси хӗрӗ Елизавета Васильевна учитель профессине алла илсенех – 1943 ҫулта – Ҫатракассинче вӗрентекен ӗҫне кӳлӗннӗ. Вӑл вӑхӑтра шкул директорӗнче ӗҫленӗ А. Малыгина ҫамрӑк специалиста чӑваш чӗлхипе литературине тата нимӗҫ чӗлхине вӗрентме шанать. Ҫавӑнпа пӗрлех пионервожатӑй та, 6-мӗш класс ертӳҫи те пулма тивет унӑн. Хӑйӗн предметне питӗ лайӑх пӗлнипе, ачасемпе пӗр чӗлхе тупма пултарнипе вӗренекенсен чӗрисене хӑвӑртах ҫавӑрса илнӗ вӑл. Ача темӗнле харсӑр пулсан та Елизавета Васильевна урокӗсенче шӑпах ларнӑ. Ҫакна вӑхӑт иртсен те кашни тӗл пулурах аса илеҫҫӗ кил ҫулӗнчен тухнӑ «ачасем».

Ютран килнӗ хӗр Ҫатракассинчи шкул урамӗнче вӑрҫӑ хирӗнчен килнӗ В. Короткихс салтак патӗнче хваттерте пурӑннӑ. Ял ҫамрӑкӗсен пурнӑҫне активлӑ хутшӑннӑ: тӗрлӗрен докладсемпе лекцисем вуланӑ, комсомолецсемпе субботниксене хутшӑннӑ, концерт программисене йӗркелеме, спектакльсем хатӗрлеме пулӑшнӑ. Каҫсерен Валя юлташӗпе вӑрҫӑ хирӗнчи салтаксем валли ӑшӑ алса-чӑлха ҫыхнӑ. Отпуск вӑхӑтӗнче те ҫамрӑк учитель ахаль ларман, халӑхпа пӗрле уйхирте вӑй хунӑ.

Яштак пӳллӗ те илемлӗ сӑн-питлӗ чипер хӗре куҫ хывакан пулман мар. Вӑрҫӑ хирӗнчен ҫӗнтерӳпе таврӑннӑ Ятман каччипе Николай Ивановпа ҫеҫ ӑна ҫемье ҫавӑрма пӳрнӗ шӑпа. Ҫамрӑк мӑшӑра ҫӑмӑлах пулман. Николай Иванович страхлакан агент пулса ӗҫленӗ, хыҫҫӑн Ятман ялӗнчи колхоза ертсе пынӑ. Вӑхӑт ытларах ӗҫре иртнӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсем ял ӗҫченӗсемшӗн ҫӑмӑлах килмен. Килти хуҫалӑх ӗҫӗ вара ытларах ҫамрӑк хӗрарӑм ҫине тиеннӗ. Ҫапах каччӑ тухнӑ хыҫҫӑн та Елизавета Васильевна юратнӑ ӗҫе пӑрахман. Хӑйӗн предмечӗсӗр пуҫне завуч ӗҫӗ те сахалах мар вӑхӑт йышӑннӑ. Ку вара тимлӗхне те, ответлӑхне те ытларах ыйтнӑ. Анчах нихӑҫан та вӑл пӗрле ӗҫлекенсем ҫине сасӑ хӑпартман, вӑхӑтра кирлӗ сӗнӳ, пулӑшу пама тӑрӑшнӑ. «Пӗлмесен кӗнекенсенче шыраса тупма е пӗлекеннисенчен ыйтма тӑрӑшӑр», – тенӗ вӑл кӑмӑллӑн вӗрентсе ҫамрӑксене.

Мӑшӑрӗпе вӗсем икӗ ывӑл ҫуртса ӳстернӗ. Хӑйӗн ывӑлӗсене те вӗрентме тивнӗ шкулта. Анчах та вӗсене пуҫран лӑпкаман, ыттисенчен ытларах ыйтма тӑрӑшнӑ, уйӑрман. Халӗ икӗ ывӑлӗ те аслӑ пӗлӳллӗ, хӑйсем суйласа илнӗ профессисемпе Чул хула тата Мускав ҫывӑхӗнчи хуласенче ӗҫлеҫҫӗ. Кашни ҫулах инженерпа врач юратнӑ амӑшне килсе курма тӑрӑшаҫҫӗ. Мӑнукӗсем те, сайра-хутра пулин те, асламӑшне килсе савӑнтараҫҫӗ. Шел, ҫак савӑнӑҫа мӑшӑрӗ кураймарӗ.

Елизавета Ивановӑн ӗҫ стажӗ 40 ҫул. Унӑн ӑсталӑхӗпе тӑрӑшулӑхне ҫӗр-шыв шайӗнчех тивӗҫлипе хакланӑ. Елизавета Васильевна ачасемпе вӗсен ашшӗ-амӑшӗн юратӑвӗсӗр пуҫне «1941 – 1945 ҫулсенчи Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче хастар ӗҫленӗшӗн» медале, кӑкӑр ҫине ҫакмалли «Халӑха ҫутта кӑларассин отличникӗ» медале, «Ӗҫре палӑрнӑшӑн» медале тивӗҫнӗ. Чи палӑрмли вара – «Чӑваш Республикин Тава тивӗҫлӗ учителӗ» хисеплӗ ят.

Паян ветеран пӗччен мар. Лева ывӑлӗпе пурӑнать. Эпир хамӑрӑн юратнӑ учителе ҫак сумлӑ юбилей ячӗпе чунчӗререн саламлатпӑр, сиплентерӗ самантсемшӗн каҫару ыйтатпӑр, такӑр та вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**С. НИКИТИНА.**

Ҫатракасси шкулӗ.

Ҫыру ҫырнӑ хыҫҫӑн

# Ачасем – пирӗн пуласлӑх

Амӑшӗпе ачи автобусра ларса пыраҫҫӗ тет. Ачи пӗрмаях урине сулласа пырать. Умра ларса пыракан кинемей кун пирки асӑрхаттарсан ача амӑшӗ: «Эпӗ ачана хӗвел анӑҫ меточӗпе ҫитӗнтеретӗп, ҫавӑнпа ним тума та чармастӑп», – тесе хуравлать. Кӑна илтсен умра ларакан патвар каччӑ ҫӑварӗнчен чӑмлакне кӑларать те ача амӑшне ҫамкинчен ҫат! тутарать. «Мана та анне ача чухне ним тума та чарман», – тесе хурать.

Те чӑнласах пулнӑ, те суя – пӗлместӗп, анчах та пуҫламӑш классене килекен ачасем «ҫук», «юрамасть» сӑмахсен пӗлтерӗшне пачах ӑнланмаҫҫӗ, пӗлмеҫҫӗ. Вара пуҫланать учителӗн асап. Вӑл ачана вӗрентес вырӑнне, ашшӗ-амӑшӗн ӑна йӗркене, хӑйне мӗнле тытмаллине ӑша хывассине хӑнӑхтарса пырать. Кунта ачана хытӑрах калама юрамасть, ачи ҫилленет, ашшӗ-амӑшӗ пӑшӑрханать.

Кӑҫал 1-мӗш класс ачисемпе паллашнӑ чухне: «Ку сар ачи мӗн ятлӑ-ха?» – тесе ыйтрӑм. Эпӗ шутламан та, ача ҫакӑншӑн ҫилленнӗ иккен, ашшӗне каласа кӑтартнӑ. Ашшӗ хӑй те пӑшӑрханни ҫинчен шкула килсе пӗлтерчӗ.

Эпӗ акӑ мӗн каласшӑн (чӑваш чӗлхи пӗлменнисене). Чӑваш чӗлхинче «сар ача», «сарӑ хӗр», «сар хӗвел» сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем хитрене кӑна пӗлтереҫҫӗ. Куншӑн ҫилленмелле мар, савӑнмалла. Чӑваш чӗлхи тенӗрен, хальхи вӑхӑтра нумай ашшӗ-амӑшӗ ачисене вырӑсла вӗрентме тӑрӑшать. Анчах шкулта 4-мӗш класчен ачасем пур предмета та чӑвашла кӑна вӗренеҫҫӗ (акӑлчанпа вырӑс чӗлхисене – хӑйсен ирӗкӗпе). Каллех асап вӗрентекенӗн: ачасем чӑвашла та пӗлмеҫҫӗ, вырӑсла та ӑнлансах каймаҫҫӗ. Чӑваш чӗлхи мӗн тума кирлӗ тесе калакансене ман ҫапла калас килет: «Ачасем хӑйсем ҫитӗнсен атте-анне мӗн тума кирлӗ тесе ан калаччӑр – ҫавӑнпа кирлӗ!»

Кашни ашшӗ-амӑшӗн хӑйӗн ачи чи хитри, чи тӑнли, чи вӑйли. Эпӗ ҫакна ӑнланатӑп, анчах ача сӑмахӗ хыҫҫӑн кӳршӗсемпе е шкулти учительсемпе хирӗҫнине пӗртте ӑнланмастӑп. «Чӑвашсем ача суттине тума каламан», – тенӗ ваттисем.

Эпӗ шкулта ҫирӗм ҫул ытла ачасене физкультура вӗрентетӗп. Ачасем ҫирӗп сывлӑхлӑ пулччӑр, спортӑн хӑш енӗнче те пулин хӑйсене тупчӑр, пурнӑҫри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме хӑнӑхчӑр, юлташсене пулӑшма вӗренччӗр тесе тӑрӑшатӑп. Айккинчен пӑхсан физкультура урокӗ уяв пек: ачасем чупаҫҫӗ, выляҫҫӗ, кулаҫҫӗ... Ҫав вӑхӑтрах ача пурнӑҫӗнче, кӑмӑлӗнче тӗрлӗ улшӑнусем пулса иртеҫҫӗ. Унтах кулянмалли те, тарӑхмалли те, савӑнмалли те. Нимӗнле урокра та ачан кӑмӑл-туйӑмӗсем физкультура урокӗнчи пек ҫиеле тухмаҫҫӗ. Ҫавӑн пек пулӑмсене учителӗн вӑхӑтра асӑрхаса, йӗркелсе пымалла. Ман шутпа учителӗн ачасем умӗнче яланах тӗрӗслӗхшӗн, вӗсене пур енчен те хӳтӗлекен, пулӑшакан пулса тӑмалла. Эпӗ кунта 2013 ҫулхи октябрӗн 26-мӗшӗнче «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫатра пичетленнӗ «Вӗрентекенӗн хӑйне тивӗҫлӗ тытмалла» статья патне таврӑнатӑп.

Хальхи вӑхӑтра нумай чухне кам ӑмӑрту ирттерет, ҫав ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑрать. Эпӗ В. Моисеев тата В. Люцев учительсене ӑнланатӑп. Вӗсем хӑйсен ачисен чысне, ҫитӗнӗвне хӳтӗленӗ. Мӗнле майпа – ку урӑх ыйту, ӑна эпӗ тишкермен. Мана хама та хӑш-пӗр ыйтусем канӑҫсӑрлантараҫҫӗ.

Пӗлтӗр Шетмӗпуҫ шкул ачисем районта ирттернӗ 12 ӑмӑртуран саккӑрӑшӗнче (тӗп шкулсем хушшинче) 1-мӗш вырӑн йышӑнчӗҫ. Шкул ачисен спартакиадинче пӗтӗмӗшле кӑтартусемпе ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑчӗҫ. Ҫапах та ҫакӑншӑн пирӗн шкула нихӑш енӗпе те палӑртмарӗҫ. Пирӗн районта мала тухнӑ шкулсем валли пӗр мечӗк туянмалӑх та укҫа ҫук-ши вара?

2012–2013 вӗренӳ ҫулӗнче шкул валли спорт хатӗрӗсем туянма кӑштах укҫа куҫарнӑччӗ. Эпӗ хамӑр шкулта ачасене мӗн кирлине пӗлсе ҫавна туянма шутларӑм. Мӗн тетӗр эсир? «Бухгалтери ямасть, юрамасть», – терӗҫ. Кирлӗ мар япаласем илмелле пулчӗ. Хӑҫан эпир ачасем валли таҫта базӑсенче йӑвалана выртакан япаласене тӗксе пама пӑрахатпӑр?

Юлашкинчен эпӗ ҫакна каласшӑн. Пире халӗ ҫавӑн пек условисене лартрӗҫ: учитель халӗ ачасемшӗн мар, хӑйӗншӗн, хӑйӗн ситӗнӗвӗсемшӗн ӗҫлесен кӑна лайӑххисен шутне кӗме, лайӑх ӗҫ укҫи, наградӑсем илме пултарать. Манӑн ӗненес килет, хӑҫан та пулин «Чи лайӑххи – ачасем валли!» лозунг ҫӗнтеретех.

**С. СТЕПАНОВ,**
**Шетмӗпуҫӗнчи тӗп шкулти физкультура учителӗ.**

Пенси фончӗнче

# 435 пенсионер хушма тӳлеве тивӗҫрӗ

***Иртнӗ ҫулхи октябрь уйӑхӗнчен тытӑнса пенсие тухнисене пухӑнакан пенсисене тӳлеме тытӑнчӗҫ. Ҫав тапхӑрта тӳлев суммисене республикипе 26,3 пин, районӗпе 435 пенсионер тивӗҫнӗ. Республикипе тӳлев сумми – 233 млн. тенкӗ.***

Заявительсенчен ытларахӑшне (99,8 процент) пухӑнакан пенсие пӗр харӑс тӳлесе татнӑ. Мӗншӗн тесен пенсин пухӑнакан пайӗ пенсин пӗтӗмӗшле виҫин 5 процентне сахалрах пулнӑ. Пухӑнакан пенсие тивӗҫнисенчен ытларахӑшӗ 1953 – 1966 ҫулсенче ҫуралнӑ пенсионерсем. Вӗсемшӗн 2002 – 2004 ҫулсенче ӗҫ паракансем пенсин пухӑнакан пайӗ валли обязательнӑй страховани взносӗсем тӳлесе тӑнӑ. Патшалӑх пенсисене хушса финанслассин программине хутшӑнакансен те (пенсие тухнӑ пулсан) ҫакӑнта кӗреҫҫӗ. Вӗсене **пӗр харӑс панӑ тӳлев сумми** вӑтамран 9,5 пин тенкӗпе танлашать.

10 ҫултан тытӑнса **срокпа тӳлемелли пенси тӳлевне** республикӑра 28 пенсионера, вӑл шутран пирӗн районта 1 ҫынна шутласа панӑ. Унӑн вӑтам виҫи уйӑхне 860 тенкӗпе танлашать. Кун пек тӳлеве патшалӑх пенсисене хушса финанслассин программине хутшӑнакансене уйӑхсерен тӳлемелли сумма пенсин пӗтӗмӗшле виҫин 5 процентӗнчен нумайрах чухне параҫҫӗ.

**Ватлӑха пула паракан ӗҫ пенсийӗн ҫын виличченех тӳлесе тӑракан пухӑнакан пайне** республикипе 23 ҫынна, районӗпе 4 ҫынна памалла тунӑ. Унӑн вӑтам виҫи – уйӑхне 406 тенкӗ. Пенсин пухӑнакан пайне пенсионера уйӑхсерен тӳлемелли сумма пенсин пӗтӗмӗшле виҫин 5 процентӗнчен ытларах пулсан памалла тӑваҫҫӗ. Кун пек чухне пенсин пухӑнакан пайӗ валли обязательнӑй е ирӗклӗ майпа хывнӑ страховани взноссене те, инвестици тупӑшне те шута илеҫҫӗ.

Пухӑнакан пенсие Раҫҫей Пенси фончӗ е гражданин хӑйӗн пухӑнакан пенсине инвестицилеме хӑй суйласа илнӗ патшалӑх тытӑмне кӗмен пенси фончӗ тӳлет. Патшалӑх тытӑмне кӗмен пенси фончӗсен тата вӗсен регион офисӗсен адресӗсемпе телефонӗсене Интернетра тупма пулать е Раҫҫей Пенси фондне тӳлевсӗрех тата талӑкӗпех 8-800-510-55-55 номерпе шӑнкӑравлама май пур.

**Пенси фончӗн районти управленийӗ.**

# Йыш пысӑкланчӗ



**Шкулсенче**

«Чуна – Турра! Пурнӑçа – Тӑван çӗр-шыва! Тивӗçе – хама! Чыса – никама та!» Савӑнӑçлӑ та хавхалануллӑ лару-тӑрура çак сӑмахсене хыттӑн та уçӑмлӑн каласа тупа турӗç ачасем. Муркаш шкулӗнчи 5 класра вӗренекен хастар ачасене иртнӗ эрнере кадетсен йышне илчӗç.

Республикӑпа хамӑр районти чылай сумлӑ хӑна пуçтарӑнчӗ çак мероприятие. Мӗн чул ырӑ сӑмах каламарӗç пуль вӗсем тин кӑна кадет пулса тӑнӑ ачасене. Паллах, кашни кадет пӑлханчӗ пулин те, хӑйӗншӗн чи кирлӗ сӑмахсене ӑса хывса юлчех.

Кадет пуласси илӗртӳллӗ форма тӑхӑнса çӳресси кӑна мар. Çак ята ӗçпе, чыспа чӑннипех те тивӗçлӗ пулмалла, унсӑр формӑн та сумӗ пӗтет. Пурнӑçри пӗлтерӗшлӗ утӑма тунӑ ачасене ашшӗ-амӑшӗ çакна ӑнлантарма тивӗç. Тепӗр тесен кашни ашшӗ-амӑшех кадетӑн ашшӗ-амӑшӗ пулаймасть, кашни ачан та кадет пулма тӳр килмест. Çавӑнпа та вӗсем кадет ятне çӳллӗ шайра тытса тӑма çӑмӑл маррине туйма тивӗç. Кадет тени авалтанпах Тӑван çӗр-шыва юратнипе, атте-аннепе юлташсене хисепленипе, тивӗç, чыс тенипе çыхӑннӑ. Паян та, вӗренӳ тытӑмне çӗнетнӗ вӑхӑтра, кадет класӗсем хӑйсен пӗлтерӗшне çухатмаççӗ.

Кадетсен шкултан тӗрлӗ енлӗ аталаннӑ, йӗркеллӗ, хӑйне темӗнле лару-тӑрура та тӗрӗс тытма пӗлекен çамрӑк пулса тухас тесен нумай тар тӑкма тивӗ. Анчах та тупа тунӑ чухнехи сӑмахсене, ашшӗ-амӑшӗн, учительсен шанӑçне ачасем тӳрре кӑларассине ӗненес килет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Ял тӑрӑхӗсенче**

# Пурнӑç çулӗ – малаллах

***Епле пулсан та кирек кам та яланах малалла пӑхать. Ӗнер – паянхи, паян – ыранхи куна шанӑçпа пӑхатпӑр, малашлӑха шанатпӑр, ӗненетпӗр, малах талпӑнатпӑр. Мӗнле пурӑнаççӗ-ха, мӗнле туяççӗ хӑйсене паян вырӑнти ял тӑрӑхӗсем?***

**Уйкас Янасал.** Масарсене кирлӗ пек пӑхса тӑни пӗлтерӗшлӗ пулни каламасӑрах паллӑ. Çакӑ вӑл – пирӗнтен уйрӑлса кайнисене сума суни, хамӑра хамӑр хисеплени. Акӑ Уйкас Янасал ялӗ патӗнчи масар çинчи çурт ишӗлсе аннӑччӗ. Ял тӑрӑхӗнче пурӑнакансем масар çинче йӗрке тӑвас ӗçе активлӑ хутшӑннӑ. Кӑçал кунта çӗнӗ çурт тата вилнӗ çынсемпе сыв пуллашмалли вырӑна çӗнӗрен туса лартнӑ. Ку тӗлӗшпе вырӑнти Ильич яч. хис. хуçалӑх пысӑк пулӑшу кӳнӗ, çурт валли çӗнӗ пура туянса панӑ. Кирлӗ строительство материалӗсене туянма вара укçа-тенкӗне ял çыннисем хӑйсем пухнӑ.

Масар хапхи те юрӑхсӑра тухнӑ пулнӑ. Сварщик, вырӑнти рабочисем тӑрӑшнипе хапхана тимӗртен ӑсталанӑ, сӑрласа илемлетнӗ. Халӑх сурсан кӳлӗ пулать тесе ытахальтен каламан ваттисем.

**Мӑн Сӗнтӗр.** Мӑн Сӗнтӗр библиотекинче «Затейник» клуб ӗçлет. Кунта çӳрекен шкул ачисем тӗрлӗ хатӗрсем ӑсталама вӗреннипе пӗрлех çут çанталӑка, тавралӑха илем кӳрессине те хӑйсен тивӗçӗ тесе шухӑшлаççӗ.

Вӑрттӑнлӑх мар, хальхи вӑхӑтра хамӑрӑн тавралӑх тӗлӗшпе пур чухне те тимлӗх уйӑрса çитерейместпӗр. Çавӑнпа та клуб ертӳçи Н. Трихалкина ачасене йывӑççем лартма явӑçтарнӑ. Малашне вара вӗренекенсем йывӑççене хӑйсемех пӑхса тӑрӗç.

**Ильинка.** Çак кунсенче Вӑрманкассинчи шкул пулнӑ çурт çине асӑну хӑми вырнаçтарнӑ. Ӑна шкулта ӗçленӗ учителе, РСФСР халӑха çутта кӑларас ӗç отличникне Георгий Перлова халалланӑ.

Георгий Федорович 1937 çулта Çеçмер ялӗнче çуралнӑ. 1959 çулта Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен вӗренсе тухсан икӗ çул хушши Шатракассинчи 8 çул вӗренмелли шкулта, 1961 çултанпа Вӑрманкассинчи 8 çул вӗренмелли шкулта ӗçленӗ, чӑваш чӗлхипе тата литературипе, вырӑс чӗлхипе тата литературипе, нимӗç чӗлхипе, физкультурӑпа вӗрентнӗ, тӗрлӗ секцисемпе кружоксене ертсе пынӑ.

Шкулти профсоюз комитечӗн председателӗ пулнӑ, 1976 – 1997 çулсенче шкул коллективне ертсе пынӑ. Çав çулсенче хуçалӑх мелӗпе шкулӑн икӗ çуртне çӗнӗрен туса лартма пултарнӑ.

**Çатракасси.** Кашмашри информаципе культура центрӗнче спорт уявӗ йӗркеленӗ. Унта аслӑ классенче вӗренекенсем хутшӑннӑ. Ачасем тӗрлӗ спорт ӑмӑртӑвӗсемпе хускану вӑййисенче вӑй виçнӗ, конкурссене хутшӑннӑ. Кашмаш шкулӗн пуçламӑш класра вӗренекенсен учителӗ Е. Тихонова ӑста ертсе пынипе вӗсем çӳллӗ шайра иртнӗ.

**Юнкӑ.** Муркаш районӗнче кӑçал капиталлӑ юсамалли çуртсем шутне Юнкӑ ялӗнчи Центральная урамри 18 хваттерлӗ 35-мӗш çурта та кӗртнӗ. Подряд ӗçӗсене пурнӑçлаканӗ – чикӗллӗ яваплӑхлӑ «Мера» общество.

Нумаях пулмасть кунти юсав ӗçӗсене комисси йышӑннӑ. Ун шутӗнче пурӑнмалли çурт-йӗр инспекцийӗн, Технадзорӑн, район администрацийӗн, вырӑнти ял тӑрӑх администрацийӗн, асӑннӑ çуртра пурӑнакансен представителӗсем пулнӑ. Ӗç калӑпӑшне пӗтӗмпех пурнӑçланине палӑртнӑ. Çавӑнпа пӗрлех асӑрхаттарусем те пулман мар. Кусем вӗсем юсав ӗçӗсене туса ирттернӗ май территорие тирпей-илем кӗртесси, кабельсене хупласси т. ыт. те. Туса ирттернӗ ӗçсен пахалӑхне палӑртассипе нумай хваттерлӗ çуртра пурӑнакансен пӗрлехи пухӑвне ирттерме йышӑннӑ.

**Ярапайкасси.** Ача çурални – кашни çемьешӗнех пысӑк пӗлтерӗшлӗ событи. Ял тӑрӑхӗнче кӑçал 35 ача çуралнӑ. Вӗсенчен 5-шӗ – октябрь уйӑхӗнче. Кусем вӗсем Елизавета, Степан, Виктория, Дарья тата Артем. Çак кунсенче вара 35-мӗш пепкене – Екатеринӑна – регистрациленӗ.

Йыш хушӑнать – ял пурӑнать, теççӗ. Ку чӑнах çапла. Апла пулсан пирӗн ӗçсене малалла тӑсма тивӗçлӗ смена хатӗр пулӗ.

**Ярославка.** Кӗрхи призыв тапхӑрӗ пырать. Çул çитнӗ яшсене Раççей çарӗн ретне ӑсатаççӗ. Акӑ ноябрӗн 6-мӗшӗнче Валерий Шадринпа Шупашкарти строительство техникумӗн студентне Кирилл Ермолаева арçыннӑн чыслӑ тивӗçне пурнӑçлама салтака ӑсатнӑ. Яшсем, ан кулянӑр, нумайлӑха мар вӗт, çулталӑклӑха кӑна, хӑвӑрӑн савнисем кӗтсе илеççех сире. Вӗсем патне чуна çывӑх çырусем çырма ан манӑр.

**Ял тӑрӑхӗсен сайчӗсенчи материалсемпе усӑ курса В. ШАПОШНИКОВ хатӗрленӗ.**

**Редакци почтинчен**

## Кун-çула малалла тӑсаççӗ

Эпӗ Шомик ялӗнче çуралса ӳснӗ. Октябрӗн 11-мӗшӗнче хытӑ чирлесе ӳкрӗм. Катькас ял тӑрӑхӗнчи участок врачӗ Елена Михайловна Воронина тӑрӑшнипе Мӑн Сӗнтӗр больницине выртарчӗç. Маншӑн питӗ хыпкаланчӗ вӑл. Пысӑк тав сӑмахӗ калас тетӗп ӑна.

Мӑн Сӗнтӗрти больницӑри терапи уйрӑмӗнче сипленме тиврӗ. Кунта – чӑн-чӑн сывлӑх хуралçисем. Чирлисемшӗн ырми-канми тӑрӑшаççӗ вӗсем. Чирлекенсем вара нумайӑшӗ – пушӑ вырӑнсем çук. Ватӑ тесе каламаççӗ, пурне те пӗр пек пӑхаççӗ. Çирӗп сывлӑхлӑ пулччӑр тесе тӑрӑшаççӗ, пирӗн кун-çула малалла тӑсаççӗ.

Пурне те тав тӑватӑп, ырлӑх-сывлӑх сунатӑп. Акӑ вӗсем, пирӗн сывлӑхшӑн тӑрӑшакансем: Александра Кондратьева врач, Елена Волкова, Нина Косарева, Зоя Хмелева, Маргарита Пайкова, Римма Подилкина медсестрасем, Лидия Волкова, Алевтина Буронова, Зинаида Уртюкова, Вера Пайвахтина санитаркӑсем.

**С. ПАРИКОВА.**

Шомик ялӗ.

**Спорт**

## Муркашсем малта

Октябрӗн 24–26-мӗшӗсенче Çӗнӗ Шупашкар хулинче аслӑ яшсен тата юниорсен ӳсӗмӗнчисен бокс ӑмӑртӑвӗсем пулчӗç. Ӑмӑрту ЧР физкультурӑпа спортӑн тава тивӗçлӗ ӗçченне Д. Игнатьева асӑнса иртрӗ.

Муркаш районӗн боксерӗсем – районти ачасемпе çамрӑксен спорт шкулӗ – «Сывлӑх» ФСК воспитанникӗсем, халӗ Шупашкарти олимп резервӗсен училищин вӗренекенӗсем çак ӑмӑртӑва хутшӑнмасӑр юлмарӗç. Д. Грачев (46 кг) 1-мӗш, Г. Балканов (46 кг) 2-мӗш, А. Корчагинпа (56 кг) Н. Музыков (60 кг) 3-мӗш вырӑнсем йышӑнма пултарчӗç.

Çак ӑмӑртури хӗрӳ кӗрешӳсенче Денис Грачев спорт маçтӑрӗн кандидачӗн нормативӗсене пурнӑçлама пултарчӗ.

Боксерсене тата С. Черкашин тренера унӑн воспитанникӗсен черетлӗ çитӗнӗвӗсемпе саламлатпӑр.

**О. ЕГОРОВА, «Сывлӑх» ФСК администраторӗ.**

**Кадровый резерв**

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 9 ноября 2013 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика - от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

е) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

ж) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления ( по 8 декабря 2013 года включительно по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: с.Большой Сундырь, ул.Советская, д.16.

